Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

23 (7984) № * Юн кун, 2012 ҫулхи пуш (март) уйăхĕн 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республика хыпарĕсем

## Тĕп уява хатĕрленсе

Правительство ҫуртĕнче Республика кунне хатĕрленессипе ĕҫлекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртнĕ. ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн ҫумĕ – Чăваш Республикин Пуҫлăхĕн Администраци ертӳҫи Александр Иванов уявра йĕркелекен лару-канашлупа, ĕҫлĕ тĕл пулусемпе, кану программипе паллаштарнă. Вĕсен проекчĕсене хатĕрленĕ пулин те, вице-премьер мероприятисене пуянлатасси ҫинчен тепĕр хут асăрхаттарнă.

Аса илтеретпĕр, кăҫалхи уяв тĕп хулапа Шупашкар районĕнче иртет.

## Кредит илмелли условисем лайăхланĕҫ

Чăваш Ен Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ эрнере республикăн Наци банкĕн председателĕпе Анатолий Уховпа тĕл пулнă. Ĕҫлĕ тĕл пулура банкăн финанспа экономика ĕҫ-хĕлĕн, республикăра банк бизнесне ăнăҫлă тытса пырассин ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

Анатолий Ухов 14 филиалтан, 48 операци тата 18 кредит офисĕсенчен тăракан банк пĕтĕм Раççейри заемщиксемпе ĕҫлени ҫинчен каланă. Нацбанк председателĕ рефинансировани виҫи 8-тан 7,25 процент таран чакасса шаннине палăртнă. Ҫакă, паллах, халăха кредит илме хавхалантарĕ, лайăхрах майсем туса парĕ.

Ҫур аки умĕн

## Удобрени кӳреҫҫĕ

Ҫурхи ҫанталăк ял хуҫалăх ĕҫченĕсене ҫур аки ĕҫĕсем ҫывхарнине систерет, ака-сухара усă курмалли техникăна ĕҫ валли кирлĕ пек юсаса хатĕрлеме ыйтать.

Халĕ каланипе пĕрлех минераллă удобренисем янтăласси те ҫĕр ĕҫченĕшĕн паян иккĕмĕш вырăнта мар. Пуш уйăхĕн 23-мĕшĕ тĕлне хуҫалăхсем район администрацийĕн ял хуҫалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе паллаштаратпăр. Вĕсене пăхсан хуҫалăхсенче паян пĕтĕмпе 465,4 тонна минераллă удобрени пурри куç умне тухать. Хальлĕхе пуринчен те ытларах ăна «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра янтăланă.

## Вĕсем вăрлăх хатĕрлĕҫ

Чăваш Республикин Ял хуҫалăх министерствинче иртнĕ кунсенче вăрлăх янтăлассипе специализациленекен хуҫалăхсене суйласа илессипе конкурс вĕҫленнĕ. Вĕсем 2012 ҫулта ыттисене элитăллă вăрлăхпа тивĕҫтерме пултараççĕ.

Конкурс комиссине пирĕн районтан 4 хуҫалăх заявкăсем тăратнă: «Герой», Ильич яч. хис., «Ударник» пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсем тата В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуҫалăхĕ. Ятарлă комисси протоколĕпе вĕсене пурне те вăрлăхпа ĕҫлеме ирĕк панă.

**А. БЕЛОВ.**

Пултаруллисем – стипендиатсем

## Малашлăха шанчăклăн пăхать



*Михаил Германович Блинов Шалти ĕҫсен министерствин районти уйрăмĕнче вăй хурать. Ҫамрăк специалист – ҫул-йĕр патруль службин инспекторĕ. Ĕҫре аслă ĕҫтешĕсен опытне шута хурса, ҫĕнĕлĕхсене алла илсе тимлесси уншăн тĕп вырăнта пулнине калать. Кулленхи ĕҫпе пĕрлех Михаил Германович чылай мероприятие хутшăнать, ытларах вара спорт ăмăртăвĕсене кăмăллать.*

*Хастар ҫамрăк пĕлтĕрхи ĕҫ кăтартăвĕсемпе тата обществăлла мероприятисене активлă хутшăннăран ЧР Президенчĕн стипендине тивĕҫрĕ.*

**Н. НИКОЛАЕВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

Райадминистрацире

## Нумай ҫул ĕҫленĕшĕн

***Район администрацийĕн пуҫлăхĕн 2012 ҫулхи мартăн 13-мĕшĕнчи 235 № йышăнăвĕпе ҫаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Муркаш районĕнчи шкулчченхи вĕрентӳ тытăмĕн аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн тата йĕркеленĕренпе 25 ҫул ҫитнĕ май **«14 № «Золушка» ача сачĕ» муниципаллă бюджетлă шкулчченхи вĕренӳ учреждение**нине.

2. Вĕрентӳ тытăмĕнче нумай ҫул тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн:

- «Золушка» ача садĕнчи воспитателĕн пулăшаканне **Вера Александровна ЕРШОВĂНА**;

- «Золушка» ача садĕнчи воспитателĕн пулăшаканне **Ирина Ивановна УГОЛЬНИКОВĂНА**.

3. Халăх ыйтăвĕсене тивĕҫтерес сферăра нумай ҫул тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн «Юман» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн директорăн пĕтĕмĕшле ыйтусемпе ĕҫлекен ҫумне **Сергей Зиновьевич ТИХОНОВА**.

4. Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх сферинче нумай ҫул тӳрĕ кăмăлпа ĕҫленĕшĕн «Пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн дворникне **Светлана Юрьевна ОНЬКОВĂНА**.

Марафон

## Хальлĕхе 700 пин тенкĕ ытла

Мартăн 23-мĕшĕ тĕлне республикăра «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕн пухмачри укҫа-тенкĕ сумми 707 пин тенкĕрен иртнĕччĕ.

Чылай районпа хула хăйсен тӳпине хывать. Пирĕн район вара хальлĕхе «чĕнмест-ха». Ачасен пурнăҫĕ савăнăҫлăрах та телейлĕрех пултăр тесе кашнинех тăрăшасчĕ. Пуҫаруллăрах пуласчĕ, ентешсем!

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Туберкулеза хирĕҫ

## «Шурă ромашка» акцие хутшăнăр

Ҫулсеренех мартăн 20-мĕшĕнчен пуҫласа апрелĕн 20-мĕшĕччен республикăра "Шурă ромашка" акци иртет. Ҫак акцие Пĕтĕм тĕнчери туберкулеза хирĕҫ кĕрешмелли куна (мартăн 24-мĕшне) халалланă. Акци ҫынсене туберкулез хăрушă чир пулнине тата ăна тупса палăртассинче флюорографи тĕрĕслевĕ витĕмлĕ пулнине аса илтерет. Асăннă тапхăрта пурне те Муркашри тĕп больницăра, Мăн Сĕнтĕрти больницăра флюорографи кабинечĕсенче тӳлевсĕр йышăнаççĕ.

**О. МИХАЙЛОВА,**
**фтизиатр врач.**

Ҫырăнтару

## Халĕ шăмат кунсерен – 6 страница, июль уйăхĕнчен – 8 страница

Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата вулакансене 2008 ҫултанпа 191 тенкĕ те 70 пуспа ҫырăнтаратпăр. 4 ҫул хушшинче сахал мар шыв юхса иртрĕ, пурнăҫ та чылай улшăнчĕ. Хаксем те пĕр хут мар ӳсрĕҫ. Апла пулин те редакци ҫырăнтару хакне хăпартмарĕ, хушма тăкаксене хăй ҫине илчĕ.

Паянхи васкавлă пурнăҫ вара пире те малашлăха тинкерме хистет. Паян конкурентлă пулас тесен пĕр вырăнта тăмалла мар, малалла аталанмалла.

Июль уйăхĕнчен эпир «Ҫĕнтерӳ ялавĕн» калăпăшне ӳстерме палăртатпăр. Халĕ район хаҫачĕ юн кунсерен 4 страницăпа, шăмат кунсерен 6 страницăпа тухать. Иккĕмĕш ҫур ҫулта вара шăмат кунсерен 8 страницăпа пичетлеме пуҫлатпăр. Юн кунхи кăларăм ҫаплипех юлать.

Тата 2 страница хушни вулакан патне ытларах информаци ҫитерме май парать. Кун пек чухне вара тăкаксем те ӳсеҫҫĕ: типографие ытларах тӳлемелле, хутне те малтанхинчен нумайрах туянмалла. Пĕрремĕшĕ те, иккĕмĕшĕ те паян йӳнĕ мар.

Малашлăхра тата хаҫата икĕ тĕспе пичетлеме планлатпăр.

Ҫак сăлтавсене шута илсе ҫырăнтару хакне апрелĕн 1-мĕшĕнчен 12 тенкĕ те 30 пус чухлĕ хăпартатпăр. Унччен вара, хисеплĕ вулакансем, малтанхи хакпах ҫырăнма ĕлкĕретĕр.

Район хаҫатне апрелĕн 1-мĕшĕнчен ҫырăнмалли ҫĕнĕ хак – 204 тенкĕ.

Малашне те пĕрле пулар!

**Райхаҫат редакцийĕ.**

Районта

## Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУҪАЛĂХСЕНЧИ МАРТĂН 26-МĔШĔНЧИ КĂТАРТУСЕМ**

**Колонкăсенче: 1. Ĕне шучĕ (пуҫ). 2. Пĕр ĕне пуҫне тивекен кăҫалхи талăкри вăтам сăвăм (килогрампа). 3. Иртнĕ ҫулхи кăтарту. 4. Сутлăх сĕт хисепĕ (процентпа)**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Суворов яч. хис. | 200 | 17,0 | 18,5 | 92,6 |
| АФ «Путь Ильича» | 70 | 16,0 | 8,9 | 93,8 |
| «Свобода» | 291 | 14,7 | 12,0 | 84,3 |
| «Оринино» | 205 | 14,6 | 12,7 | 94,9 |
| АПФ «Колос» | 4 | 13,0 | 13,0 | 86,5 |
| Чкалов яч. хис. | 66 | 10,9 | 10,3 | 83,3 |
| «Ударник» | 490 | 10,4 | 10,2 | 84,3 |
| «Герой» | 176 | 10,3 | 9,8 | 82,9 |
| Ильич яч. хис. | 244 | 9,8 | 11,3 | 83,3 |
| «Восток» | 81 | 9,3 | 8,2 | 80,8 |
| Чапаев яч.хис. | 102 | 7,8 | 7,1 | 92,5 |
| Е. Андреев яч.хис. | 128 | 7,3 | 7,0 | 84,9 |
| «Передовик» | 96 | 6,8 | 11,9 | 61,5 |
| **Районĕпе** | **2153** | **11,6** | **11,2** | **86,5** |

Саламлатпăр



Хаклă та юратнă мăшăра, аннене, кукамая, асаннене – Кăпас ялĕнче ҫуралса ӳснĕ **Евдокия Викторовна СТЕПАНОВĂНА** 70 ҫул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Тĕнчери мĕн пур ыррине сунатпăр сана, хаклă ҫыннăмăра: юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хăват.

Вăхăчĕ иртет вăл ирĕн-каҫăн,
Уншăн эсĕ ан кулян, анне.
Ырлăх-сывлăх патăр сана Турă,
Ан парăн йывăрлăха, чирсене нихҫан.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ тата мăнукĕсем.**



Пирĕн хаклă ҫыннăмăра, аннене, кукамая, асаннене, кинемие – Уйкас Хачăк ялĕнче пурăнакан **Агния Степановна ШАРОВĂНА** паянхи 85 ҫулхи ябилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, юман пек ҫирĕп сывлăх сунатпăр. Эпир сана питĕ хытă юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Пысăк салампа: ачисем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, ҫывăх тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă аттене, асаттене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Виталий Валерианович ЕФРЕМОВА** паян 60 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Эсĕ пурри – нимĕнпе виҫейми пуянлăх, савăнăҫ, телей. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, мухтатпăр. Тавтапуҫ сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, хăтипе тăхлачи тата тăванĕсем.**

# Кунта истори упранать

## Архив ĕçĕ-хĕлĕ

Çĕршер, пиншер çыннăн пурнăçĕнче архив пысăк вырăн йышăнать: архив документчĕсемпе пурте усă куратпăр. Уйрăмах юлашки икĕ вунă çуллăхра, тĕрлĕ сферăра улшăнусем пулса иртнĕ вăхăтра, çынсем архивсенче упранакан информаци кирлине туйса илни сисĕнет.

Унти документсем хăш чухне саккунлă правасемпе интересене те хӳтĕлеме май параççĕ-çке-ха. Акă, сăмахран, пенси реформине иртнĕ вăхăтра тĕрлĕ документ ыйтакансем самаях йышланчĕç. Стаж çирĕплетмелле-и е ĕç укçи калăпăшне кăтартакан справкăсем кирлĕ-и – пĕтĕмпех архивра тупма пулать. Архивран панă документсем тăрăх вара пенси укçин калăпăшне çĕнĕрен пăхса тухма, укçан компенсаци пама пултараççĕ. Пĕтнĕ организацисем хăйсем патĕнче ĕçленĕ çынсем пирки калакан документсене архива упрама парса тăнăран ку енĕпе те ĕç сахал мар.

Юлашки вăхăтра пурăнмалли çурт, хуçалăхри ытти çурт-йĕр харпăрлăхра пулнине çирĕплетекен, пурлăх, çĕр пуррине кăтартакан документсемпе ытларах ĕçлеме тивет.

Ялсем мĕнле пуçланса кайнине, хушамат-йăхсем камран е мĕнрен пуçланнине тĕпчекенсем те архива нумайăн килеççĕ. Тĕрлĕ документсем тăрăх тĕпчев ĕçĕсем иртереççĕ. Интересленекенсем хушшинче ачасемпе çамрăксем сахал марри савăнтарать. Вĕсем пирĕн мăн асаттесем тытса пынă йăла-йĕркесем çинчен пĕлме тăрăшни, вырăнти историпе пĕтĕмĕшле кăсăкланни пуласлăх пуррине çирĕплетет те ĕнтĕ.

Пĕлтĕр пирĕн районти муниципаллă архив документсемпе 4 пин çын усă курнă. Иртнĕ çулталăкра пурĕ кунта 835 единица документ управа йышăннă, вĕсен шутĕнче 466 ертсе пыраканĕ çыхăннă документсен, ĕçлекенсем пирки – 15 организаципе предприятирен пурĕ 387 документ. Чăваш Республикин Культура министерствин экспертпа тĕпчев комиссине 807 единица опись çирĕплетсе панă.

Документсене тĕрĕс йĕркелес тата упрас тĕллевпе организацисенче 5 комплекслă, 4 тематикăллă тата 6 контроль тĕрĕслевĕсем иртертĕмĕр. Тĕрĕслевсенче çитменлĕхсем тупса палăртнăран вĕсене пĕтерме актсем те çырма тиврĕ.

Граждансен социаллă, право тата пурлăх тĕлĕшпе тухакан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси пирĕн тĕп задача пулса тăрать. Акă 2011 çулта пирĕн пата пурĕ хут документ ыйтса 2446 çыру килчĕ. Социаллă, право тата пурлăх тĕлĕшпе пурĕ 2368 справка панă, 2276-шĕ – вăл е ку факт пулнине тата пуррине çирĕплетекеннисем. Кирлĕ информацие шыраса çичĕ тĕпчевçĕ 500 ытла документпа вулав залĕнче ĕçлерĕ. Документсемпе усă куракансем валли пĕтĕмĕшле 8 пин документа яхăн пăхса тухнă, вĕсенчен пысăк пайĕ – 6 пин документа яхăн – «личнăй состав» категорийĕнчи документсем.

Муркаш районĕн муниципаллă архивĕнчи документсем истори, культура тата пурлăх тĕлĕшпе районта пурăнакансемшĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ шутланаççĕ. Çавăнпа та архивра ĕçлекенсем упранакан документсемпе кашниех усă курма пултартăр тесе тăрăшаççĕ.

**А. ФЕДОРОВА,**
**культура тата архив ĕçĕсен пайĕн эксперт специалисчĕ.**

## Ырă хыпарсем

### «Çурхи тумлам»

Çак ятпа Лапсар поселокĕнче пуш уйăхĕн 16–17-мĕшĕсенче Олимп чемпионĕ А. Тихонов ячĕпе хисепленекен йĕлтĕр базинче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртнĕ. Старта чăваш йĕлтĕрçисемпе пĕрле Мари Эл Республикинчен, Пенза, Саратов, Киров облаçĕсенчен килнĕ спортсменсем тухнă.

Муркашсем те çак ăмăртуран катара юлман. В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнче ăсталăх пухакан тата Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекен Стас Степанов 2000–2001 çулсенче çуралнă ачасем хушшинче ăмăртса пĕрремĕш кунне классика мелĕпе чупса финиша пĕрремĕш çитнĕ. Иккĕмĕш кунне ирĕклĕ майпа ăмăртса Стас 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă.

**А. БЕЛОВ.**

### Йăлана тăсаççĕ

Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче хĕрарăмсен канашĕн председателĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем ирттересси – ырă йăлара. Кăçал та çак ăмăртусене 6 команда хутшăнчĕ: Шетмĕпуç, Катăкуй, Карманкасси, Турхан, Сарчак тата Тивĕш ялĕсенчен. Вĕсем волейболла, шашкăлла выляссипе, çунашкапа тăвайккинчен инçерех ярăнассипе тата эстафета чупса ăмăртрĕç.

Спорт уявне хĕрарăмсен канашĕн председателĕ В. Никитина уçрĕ. Вăл ырă йăлана кĕнĕ çак ăмăртура пурне те ăнăçу сунчĕ.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров спорт ырă йăлара пулни çынсем малашлăха ĕненнине çирĕплетни çинче чарăнса тăчĕ. Кун пек чухне вара сывлăх – чи кирли.

Ăмăртăван кашни тĕсĕнчех çĕнтерӳçĕсем пулчĕç, анчах çак кун старта тухнă хĕрарăмсем çак уява йĕркелеме пултарни тĕп çĕнтерӳ тесе йышăнчĕç.

**В. НИКИТИНА.**

### Маттур, Настя!

Ачасен творчество шыравĕн тата технологи культурин туртăмне ӳстерес тĕллевпе республикăра 9-мĕш «Шырав» наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ. «С. Михайлов ячĕллĕ Юнкăри вăтам шкул» бюджет вĕрентӳ учрежденийĕнче 4-мĕш класра ăс пухакан Анастасия Киршева унта «Старта тухмалли çăра» проектпа хутшăнчĕ. Районта мала тухнăскер республикăра та хăйĕн ĕçĕпе вăл хастаррисен шутĕнче пулчĕ. 17 районтан тата хуласенчен пынă 50 ача хушшинче Настя кĕмĕл медаль çĕнсе илме пултарчĕ. Маттур, Настя!

**И. КИРШЕВА, аслă вожатăй.**

## Владимир Константинович ТЮРИН



56 çула кайса 2012 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче унччен «Герой» колхоз председателĕнче ĕçленĕ Владимир Константинович Тюрин вилсе кайрĕ. Ырă кăмăллă, тимлĕ, ыттисене пулăшма тăрăшакан, хăйĕн ĕçне парăннă çын. Вăл ăста ертӳçĕ пулнă, хăйĕн хастарлăхĕпе, таса чунĕпе, ответлăхĕпе палăрса тăнă.

Владимир Константинович Тюрин 1956 çулта ун чухне Ярапайкасси ял Советне кĕнĕ Шурча ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. 1974 çулта Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн В.И. Чапаев ячĕллĕ завода резина пушмак туса кăларнă çĕрте съемщик пулса ĕçлеме тытăннă.

1975–1977 çулсенче Совет Çарĕнче службăра тăнă. 1977–1978 çулсенче Шурчари Культура çуртĕн директорĕнче тăрăшнă. 1978–1980 çулсенче Владимир Константинович Çĕрпӳри совхоз-техникумра техник-механика вĕреннĕ, 1980 çултан пуçăнса 1993 çулхи июльччен вара «Герой» колхозра тĕп инженер пулса ĕçленĕ. 2000 çулхи март уйăхĕнче ăна «Герой» колхоз председательне суйланă. 2004 çулччен ертсе пынă хуçалăха вăл.

Владимир Константиновича çынсем тивĕçлипех хисепленĕ, унăн авторитечĕ пысăк пулнă. Ăна виççĕмĕш созыври депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутатне те суйланă.

Владимир Константинович пурнăçран вăхăтсăр уйрălса кайни сывăх çыннисемшĕн, пĕрле ĕçлесемшĕн тата нумай юлташĕсемшĕн питех те пысăк çухату.

Владимир Константинович Тюринăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче яланлăхах упранĕ.

**Муркаш район администрацийĕ.**
**Депутатсен Муркаш район Пухăвĕ.**
**Ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Мордовцемент. Прямые поставки. Тел.: 8-903-065-58-68.

* * *

Продаю сено в квадратных тюках. Тел.: 8-927-858-24-27.

* * *

В объявлении собственника земельной доли Сорокиной Мальвины Васильевны о выделении земельного участка в счет земельной доли, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 30 августа 2006 года в № 72 (7389), стр. 6, в 3 колонке, допущена опечатка. Вместо «2,70 га» следует читать «1,35 га».

* * *

Продаю сено в тюках. Тел.: 8-919-662-59-56. 2-2.

* * *

Требуются рабочие на строительство в г. Казань. Тел: 8-906-135-99-00.

* * *

Çулталăкри хура-шурă тынашки сутатăп. Хакĕ – 23000 тенкĕ. Тел.: 8-909-302-45-02, 62-3-76.

* * *

Срочно продаю а/м «Нива», трехдверный, 1998 года выпуска, зеленый, Г50, 80 тыс. руб, торг. Тел.: 8-919-650-28-44.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя, срок изготовления от 3 до 5 дней. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16А (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-655-96-77 1-2.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.

ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:
Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб.
Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова.
Доставка бесплатно от 10 куб. м.
Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07. 23-24.

Мебель на заказ: диваны, кровати, шкафы, кухонные гарнитуры, стенки, прихожие, детская мебель. Кредит, рассрочка. Адрес: с. Моргауши, «Салон мебели» (напротив магазина «Визит»).
Тел.: 8-900-330-72-60, 8-9927-847-50-77. 5-10.

Муркаш райпо коллективĕ Анаткассинчи закусочнăйĕнче буфетчицăра ĕçлекен Т.Г. Печкована
**АМĂШĔ**
вилсе кайнă пирки унăн сывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта учительте ĕçленĕ ĕçе вăрçă ветеранĕ
**Аркадий Архипович**
**АРХИПОВ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата сывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулти Н.М. Тюрина вĕрентекенĕн мăшăрĕ
**Владимир Константинович**
**ТЮРИН**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:230701:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемых земельных участков.

Заказчиком проекта межевания является: Михайлов Юрий Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 7.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:230701:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. К. Иванова, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:230701.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемых земельных участков.

Заказчиком проекта межевания является: Журавлева Римма Григорьевна, адрес: Чувашская Республика, город Чебоксары, ул. Б. Хмельницкого, д. 54, кв. 11.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:021001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:260301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемых земельных участков.

Заказчиками проекта межевания являются: Феофанова Нина Родионовна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Изедеркино, ул. Молодежная, д. 4. Феофанов Владимир Александрович, адрес: Нижегородская область, Лысковский район, с. Бармино, пл. Победы, д. 22, кв.1.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:260301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Чкалова, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:271401.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

30 марта с 8 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи производителей Ульяновск, Москва и трикотаж. 1-5.

Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» продает:
**Цемент – 190 руб.**
**Утеплитель «РОКАЛИТ»**
**8,64 кв.м. – 580 руб.** 3-10.
Доставка. Тел.: 8-903-322-59-69.

ОАО «Первая оптическая компания», г. Чебоксары

**ПРИГЛАШАЕМ**
жителей Моргаушского района
**БЕСПЛАТНО**
пройти компьютерную диагностику зрения и
**ЗАКАЗАТЬ ОЧКИ**
При заказе свыше 1000 руб. - приз моментальной лотереи!
(Разыгрываются шоколадные наборы, шоколад, шампанское и другие призы)
**31 марта**
**с 9-00 до 16-00**
возле здания администрации Орининского сельского поселения магазин «Родничок», д. Падаккасы 3-3.

## Прогноз погоды

| | среда 28 марта | | | | четверг 29 марта | | | | пятница 30 марта | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -4 | -5 | -4 | -5 | -8 | -6 | -2 | -2 | 0 | +1 | +1 | +1 |
| Давление мм | 733 | 734 | 735 | 737 | 738 | 738 | 737 | 735 | 732 | 731 | 731 | 733 |
| Влажность % | 91 | 83 | 72 | 79 | 89 | 82 | 74 | 79 | 93 | 87 | 83 | 86 |
| Ветер м/сек | 6 | 6 | 6 | 4 | 4 | 6 | 7 | 8 | 8 | 10 | 8 | 7 |
| | С | С | С-З | С-З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю |
| Солнце восход / заход | | 06:31 | 19:23 | | | 06:29 | 19:25 | | | 06:26 | 19:27 | |
| Луна восход / заход | | 08:34 | 01:05 | | | 09:21 | 01:59 | | | 10:18 | 02:44 | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 27.03.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4650.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.